27-мĕш çул тухать. Хакĕ 20 пус.

Пĕтĕм тĕнчери пролетарисем, пĕрлешĕр!

1945
февралĕ
16
эрнекун
30(6781) №

Чăваш Коммуни

ВКП(б) ОБКОМĔПЕ ШУПАШКАР ХУЛА КОМИТЕЧĔН, ЧАССР ВЕРХОВНЫЙ СОВЕЧĔН ТАТА ШУПАШКАР ХУЛА СОВЕЧĔН ХАÇАЧĔ

ВЕРХОВНЫЙ ГЛАВНОКОМАНДУЮЩИН ПРИКАЗĔ

Белоруссири 2-мĕш фронт çарĕсен командующине
Совет Союзĕн Маршалне РОКОССОВСКИЕ
Фронт штабĕн начальникне
Генерал-лейтенанта БОГОЛЮБОВА

БЕЛОРУССИРИ 2-мĕш фронт çарĕсем малалла наступлени туса пырса, паян, февралĕн 15-мĕшĕнче, ХОЙНИЦЕ (КОНИТЦ) тата ТУХОЛЯ (ТУХЕЛЬ) хулисене—çулйĕрсен пысăк узелĕсене тата нимĕçсен Польшăн хĕвеланăç пайĕнчи оборонин вăйлă тĕреклетнĕ пункчĕсене—çапăçса туртса илнĕ.

ХОЙНИЦ тата ТУХОЛЯ хулисене туртса илессишĕн çапăçнă чухне çаксем чапа тухнă: ПОПОВ генерал-полковникăн, ЛЯПИН генерал-лейтенантăн, ДРАТВИН генерал-лейтенантăн, ЧАНЫШЕВ генерал-лейтенантăн, ГУСЕВ генерал-майорăн, БЕЛЯЕВ полковникăн, МУРАТОВ полковникăн, КАРПЕЛЮК полковникăн, АСАФЬЕВ полковникăн, ФЕДОТОВ полковникăн çарĕсем; ОСЛИКОВСКИЙ генерал-лейтенантăн, ЧЕПУРКИН генерал-майорăн, БРИКЕЛЬ генерал-майорăн, КАЛЮЖНЫЙ генерал-майорăн кавалерисчĕсем; артиллери генерал-лейтенанчĕн БЕСКИНАН, артиллери генерал-майорĕн НЕФЕДОВАН, ЛЕОНОВ полковникăн, БАРМОТИН полковникăн, КУДЫМОВ подполковникăн артиллерисчĕсем; танковăй çарсен генерал-майорĕн ПЕТРУШИНАН, танковăй çарсен генерал-майорĕн ФИРСОВИЧАН, ПАНОВ генерал-майорăн, танковăй çарсен генерал-майорĕн ШУЛЬГИНАН, ДРИЛЕНОК полковникăн, ГОРБЕНКО полковникăн, МИРОНЕНКО полковникăн, ЮРЕВИЧ полковникăн, ЛОМАКО подполковникăн, ЛЕЛЮК подполковникăн, ПЕТРОВ подполковникăн танкисчĕсем; ВИНОГРАДОВ полковникăн, КАЛУГИН полковникăн, РЫБАКОВ полковникăн летчикĕсем; инженери çарĕсен генерал-майорĕн ВИТВИНИНАН, ДОБЫЧИН полковникăн саперĕсем; ПРОЦЕРОВ подполковникăн, ЧУЙСКИЙ майорăн связисчĕсем чапа тухнă.

Тунă çĕнтерĕве яланлăха палăртса хăварас тесе, ХОЙНИЦЕ тата ТУХОЛЯ хулисене туртса илессишĕн çапăçнă чухне уйрăмах чапа тухнă соединенисемпе чăçĕсене орденсемпе наградăлама тăратас.

Паян, февралĕн 15-мĕшĕнче, 21 сехетре пирĕн Тăван çĕршыв столици МУСКАВ, иксĕр çирĕм тăватă тупăпа çирĕм хут пĕр харăс персе, Белоруссири 2-мĕш фронтăн паттăр çарĕсене, малта асăннă хуласене туртса илнĕскерсене, Тăван çĕршыв ячĕпе салют парать.

Эсир ертсе пыракан çарсене, ХОЙНИЦЕ тата ТУХОЛЯ хулисене ирĕке кăларассишĕн çапăçнă çĕрте пулнăскерсене, питĕ чаплă çапăçнăшăн ТАВ ТĂВАТĂП.

Хамăр Тăван çĕршывăн ирĕклĕхĕпе никама пăхăнманлăхĕшĕн çапăçса вилнĕ геройсене ĕмĕр-ĕмĕр мухтав!

Нимĕç захватчикĕсене—вилĕм!

Верховный Главнокомандующи
Совет Союзĕн Маршалĕ И. СТАЛИН.
1945 çулхи февралĕн 15-мĕшĕ. № 280.

ВЕРХОВНЫЙ ГЛАВНОКОМАНДУЮЩИН ПРИКАЗĔ

Украинăри 1-мĕш фронт çарĕсен командующине
Совет Союзĕн Маршалне КОНЕВА
Фронт штабĕн начальникне
Арми генералне СОКОЛОВСКИЕ

УКРАИНĂРИ 1-мĕш фронт çарĕсем, наступлени вăйлатса пырса, паян, февралĕн 15-мĕшĕнче, нимĕç Силезийĕн территорийĕнче ГРЮНБЕРГ хулине тата БРАНДЕНБУРГ провинцийĕнче ЗОММЕРФЕЛЬД хулипе ЗОРАУ хулине—çулйĕрсен паха узелĕсене тата нимĕçсен оборонин хăватлăн тĕреклетнĕ пункчĕсене—туртса илнĕ.

ГРЮНБЕРГ, ЗОММЕРФЕЛЬД тата ЗОРАУ хулисене туртса илессишĕн çапăçнă чухне çаксем чапа тухнă: ГОРДОВ генерал-полковникăн, ПУХОВ генерал-полковникăн, ЛЮБАРСКИЙ генерал-лейтенантăн, МАЛАНДИН генерал-лейтенантăн, ЯМАНОВ генерал-майорăн, ГЛУХОВ генерал-лейтенантăн, ПУЗИКОВ генерал-майорăн, ОНУПРИЕНКО генерал-майорăн, САМСОНОВ генерал-майорăн, КОЛОБОВ генерал-майорăн, КРАСНОВ генерал-майорăн, ЧЕРВОНИЙ генерал-майорăн, ЭПИН полковникăн, ЖУКОВ полковникăн, ВОЛКОВИЧ полковникăн çарĕсем; ЛЕЛЮШЕНКО генерал-полковникăн, танковăй çарсен генерал-майорĕн УПМАНАН, танковăй çарсен генерал-майорĕн КОРОЛЕВАН, САДОВСКИЙ полковникăн, ОРЛОВ полковникăн, танковăй çарсен генерал-лейтенанчĕн БЕЛОВАН, танковăй çарсен генерал-майорĕн ФОМИНЫХАН, ТУРКИН полковникăн, МАХНО подполковникăн, ДЕМЕНТЬЕВ майорăн, ЕФИМОВ полковникăн, ДЕНИСОВ полковникăн, ЗАЙЦЕВ подполковникăн, ФОМИЧЕВ полковникăн, ФЕДОРОВ подполковникăн, ТУРГАНОВ майорăн, ИВАНОВ подполковникăн, КУРЦОВ майорăн, СТОЛЯРОВ майорăн танкисчĕсем; артиллери генерал-майорĕн ДЗЕВУЛЬСКИЙĔН, артиллери генерал-майорĕн МЕНТЮКОВАН, артиллери генерал-лейтенанчĕн КУБЕЕВАН, артиллери генерал-майорĕн ВОЛКЕНШТЕЙНАН, артиллери генерал-майорĕн ХУСИДАН, ПЕТРУНЯ полковникăн, ЦЕСАРЬ подполковникăн, ГУДИМОВ полковникăн, ВОИНОВ полковникăн, ДИДЫК полковникăн, ЗАСЫПКИН подполковникăн, ЛУСТИН полковникăн, КОЗЛОВ полковникăн, ГРАЧЕВ подполковникăн, ЗЫЛЬ подполковникăн, ВИЛИНСКИЙ подполковникăн, ТИМОШЕНКО майорăн, ВАГУРИН майорăн артиллерисчĕсем; авиаци генерал-полковникĕн КРАСОВСКИЙĔН, авиаци генерал-майорĕн ПРОНИНАН, авиаци генерал-майорĕн ЗАБАЛУЕВАН, авиаци генерал-майорĕн СЛЮСАРЕВАН, ОСАДЧИЙ полковникăн, СЕМЕНОВ подполковникăн, КОЛОМЕЙЦЕВ полковникăн летчикĕсем; инженери çарĕсен генерал-майорĕн ГУСЕВАН, инженери çарĕсен генерал-майорĕн ВАРВАРКИНАН, ПОЛУЭКТОВ полковникăн, ЗАЙЦЕВ полковникăн, КОРЯВКО полковникăн, ЧЕЛОМБИТЬКО подполковникăн саперĕсем; çыхăну çарĕсен генерал-майорĕн АХРЕМЕНКАН, СИМХОВИЧ полковникăн, ОСТРЕНКО полковникăн, БУДКЕВИЧ подполковникăн связисчĕсем чапа тухнă.

Тунă çĕнтерĕве яланлăха палăртса хăварас тесе, ГРЮНБЕРГ, ЗОММЕРФЕЛЬД тата ЗОРАУ хулисене туртса илессишĕн çапăçнă чухне уйрăмах чапа тухнă соединенисемпе чăçĕсене орденсемпе наградăлама тăратас.

Паян, февралĕн 15-мĕшĕнче, 23 сехетре пирĕн Тăван çĕршыв столици МУСКАВ, иксĕр çирĕм тăватă тупăпа çирĕм хут пĕр харăс персе, Украинăри 1-мĕш фронтăн паттăр çарĕсене, çӳлте асăннă хуласене туртса илнĕскерсене, Тăван çĕршыв ячĕпе салют парать.

Эсир ертсе пыракан çарсене, асăннă хуласене туртса илессишĕн çапăçнă çĕрте пулнăскерсене, питĕ чаплă çапăçнăшăн ТАВ ТĂВАТĂП.

Хамăр Тăван çĕршывăн ирĕклĕхĕпе никама пăхăнманлăхĕшĕн çапăçса вилнĕ геройсене ĕмĕр-ĕмĕр мухтав!

Нимĕç захватчикĕсене—вилĕм!

Верховный Главнокомандующи
Совет Союзĕн Маршалĕ И. СТАЛИН.
1945 çулхи февралĕн 15-мĕшĕ. № 281.

Совет Информаци Бюровĕнчен

ФЕВРАЛĔН 13-МĔШĔНЧИ ОПЕРАТИВНĂЙ СВОДКА

УКРАИНĂРИ 2-мĕш фронт çарĕсем, УКРАИНĂРИ 3-мĕш фронт çарĕсем пулăшнипе, уйăх çурă хушши хупăрласа тăрса, пысăк хулари йывăр условисенче вăйлăн çапăçнă хыççăн, февралĕн 13-мĕшĕнче БУДАПЕШТРА çавăрса илнĕ тăшман группировкине йăлтах аркатса тăкнă, çапла вара, Венгри столицине БУДАПЕШТ хулине — нимĕçсен ВЕНА хули патне каймалли çулсем çинчи оборонин стратегиллĕ паха узелне—пĕтĕмĕшпех туртса илнĕ.

БУДАПЕШТ хулинче пынă çапăçусенче УКРАИНĂРИ 2-мĕш фронт çарĕсем тăшманăн 110.000 салтакĕпе офицерне ытла тыткăна илнĕ, вĕсемпе пĕрле нимĕç çарĕсен Будапештри группине командующине Пфефер ВИЛЬДЕНБРУХ генерал-полковника тата унăн штабне тыткăна илнĕ, çавăн пекех тата çакăн пек трофейсем тытса илнĕ: самолетсем—15, танксемпе хăй тĕллĕн çӳрекен тупăсем—269, тупăсем—1.257, минометсем—476, пулеметсем—1.431, бронемашинăсемпе бронетранспортерсем—83, автомашинăсем—5.153, мотоциклсем—1.326, çар хатĕрĕсем тиенĕ лавсем—3.925, паровозсем—194, чугун çул вагонĕсем—9.475, боеприпас, хĕçпăшал тата апат-çимĕç склачĕсем—46. Тăшманăн 49.000 салтакĕпе офицерне ытла пĕтерсе тăкнă.

Февралĕн 13-мĕшĕнче БЫДГОЩ (БРОМБЕРГ) хулинчен çурçĕр-хĕвеланăçнерехре пирĕн çарсем çапла наступлени туса пынă, халăх пурăнакан 40 пункта ытла çапăçса туртса илнĕ, вăл шутра—МУКШ, КЛАЙН, БИСЛАВ, ГРОСС МЕНДРОМИЦ, ШЛАГЕНТТИН, ГЕРСДОРФ, КАМИН, ГРУНАУ ятлă пысăк ялсем.

ШНАЙДЕМЮЛЬ хулипе ПОЗНАНЬ хулинче пирĕн çарсем хупăрласа илнĕ тăшман гарнизонĕсене пĕтерсе тăкасшăн çапăçнă.

ЛИГНИЦ хулинчен çурçĕр-хĕвеланăçнерехре пирĕн çарсем наступление малалла вăйлатса пынă, нимĕç СИЛЕЗИЙĔНЧЕ халăх пурăнакан 150 пункта ытла туртса илнĕ, вăл шутра — БЕЙТЕН хули тата ГРОССЕНБОРАУ, РЮКЕРСДОРФ, МЕНСДОРФ, НОЙХАММЕР, ЛОРЕНЦДОРФ ятлă пысăк ялсем. Пирĕн çарсем тăшманăн ГЛОГАУ хулинчи гарнизонне çавăрса илнĕ, халĕ ăна пĕтерсе тăкасшăн çапăçаççĕ. Февралĕн 12-мĕшĕнче ку районра пирĕн çарсем аэродромсенче нимĕçсен 345 самолетне тата 200 авиаци моторне тытса илнĕ, çавăн пекех тата 700 нимĕç салтакĕпе офицерне ытла тыткăна илнĕ.

Фронтăн ытти участокĕсенче разведчиксем шыраса çӳренĕ тата чылай пунктра тĕллĕн-тĕллĕн çапăçнă.

Февралĕн 12-мĕшĕнче мĕнпур фронтсенче нимĕçсен 70 танкне çĕмĕрсе тăкнă. Сывлăшри çапăçусенче тата зенитнăй артиллери тăшманăн 12 самолетне персе ӳкернĕ.

ФЕВРАЛĔН 14-МĔШĔНЧИ ОПЕРАТИВНĂЙ СВОДКА

Февралĕн 14-мĕшĕнче пирĕн çарсем БЫДГОЩ (БРОМБЕРГ) хулинчен çурçĕртерехре тата çурçĕр-хĕвеланăçнерехре малалла тапăнса пынă, халăх пурăнакан 50 пункта ытла туртса илнĕ, вăл шутра—БРЕМИН, ЗДРОЕ, ОСТРОВОМ, ДЕМБОВЕЦ, НОЙ-ЗУММИН, ЕЛЕНЦ, ЛИХНАУ, МОСНИЦ, БЛЮМФЕЛЬД, ВЕДЕЛЬСХОФ ятлă пысăк ялсем. Февралĕн 13-мĕшĕнче пулса иртнĕ çапăçусенче пирĕн çарсем ку районра 500 нимĕç салтакĕпе офицерне ытла тыткăна илнĕ.

БЕЛОРУССИРИ 1-мĕш фронт çарĕсем, хупăрласа илнĕ тăшман группировки хирĕç тăнине çĕмĕрсе тăкса, февралĕн 14-мĕшĕнче ШНАЙДЕМЮЛЬ хулине—çулйĕрсен паха узелне тата Померанин хĕвелтухăç пайĕнчи нимĕç оборонин хăватлă тĕреклетнĕ пунктне—штурмласа туртса илнĕ. Малтанлăха палăртнă тăрăх, хупăрласа илнĕ тăшман группировкине пĕтерсе тăкассипе тата ШНАЙДЕМЮЛЬ хулине туртса илессишĕн çапăçнă чухне фронт çарĕсем 5.000 нимĕç салтакĕпе офицерне ытла тыткăна илнĕ тата çакăн пек трофейсем тытса илнĕ: самолетсем—203, тупăсем—30, минометсем—34, пулеметсем—217, винтовкăсемпе автоматсем—5.000 яхăн, автомашинăсем—286, тракторсемпе тягачсем—102, çар хатĕрĕсем тиенĕ лавсем—109, паровозсем—97, вагонсем—1.508, çар пурлăх склачĕсем—51. Тăшманăн, вилнисене кăна шута илсен те, 7.000 салтакпа офицер ытла пĕтнĕ.

УКРАИНĂРИ 1-мĕш фронт çарĕсем, малалла наступлени туса пырса, нимĕç Силезийĕнче НЕЙШТЕДТЕЛЬ, НЕЙЗАЛЬЦ, ФРЕЙШТАДТ, ШПРОТТАУ, ГОЛЬДБЕРГ, ЯУЕР тата ШТРИГАУ хулисене—çулйĕрсен пысăк узелĕсене тата нимĕçсен оборонин вăйлă тĕреклетнĕ пункчĕсене—çапăçса туртса илнĕ, çавăн пекех тата, тăшманпа çапăçса, халăх пурăнакан ытти 200 пункта ытла йышăннă. Февралĕн 13-мĕшĕнче фронт çарĕсем ку районра аэродромсенче тăшманăн 200 самолетне тытса илнĕ тата 2.100 нимĕç салтакĕпе офицерне ытла тыткăна илнĕ.

Çĕнĕрен палăртнă тăрăх, февралĕн 13-мĕшĕнче пулса иртнĕ çапăçусенче БУДАПЕШТ районĕнче хупăрласа илнĕ тăшман группировкине пĕтерсе тăкнă чухне УКРАИНĂРИ 2-мĕш фронтпа 3-мĕш фронт çарĕсем тăшманăн 12.700 салтакĕпе офицерне тыткăна илнĕ, вĕсенчен ытларахăшĕ—аманнисем. Тыткăна лекнисем шутĕнче—венгерсен 1-мĕш армейски корпусĕн командирĕ ХИНДИ генерал-полковник, венгерсен 12-мĕш пехотнăй дивизийĕн командирĕ БАУМАН генерал-майор, БУДАПЕШТ коменданчĕ ЧИНКЕШ Эрню генерал-майор, нимĕçсен 9-мĕш армейски СС корпусĕн артиллерийĕн командующийĕ ЛЕДИНГ полковник. Вĕлернĕ салтаксемпе офицерсен ӳчĕсем хушшинче çак командирсен виллисене тупнă: нимĕçсен 8-мĕш СС кавалери дивизийĕн командирĕн РУМОР генерал-майорăн, нимĕçсен 22-мĕш СС кавалери дивизийĕн командирĕн ЦЕХЕНТЕР генерал-майорăн виллисене тупнă. Хупăрласа илнĕ группировкăра тăнă чăссен хăшпĕр пĕчĕк юлашкисем Будапешт хулинчен çурçĕр-хĕвеланăçнерехри вăрмансене тарса ӳкнĕ, вĕсене унта çĕнĕрен хупăрласа илнĕ те халĕ ăнăçлăн пĕтерсе пыраççĕ.

Фронтăн ытти участокĕсенче разведчиксем шыраса çӳренĕ тата чылай пунктра тĕллĕн-тĕллĕн çапăçнă.

Февралĕн 13-мĕшĕнче мĕнпур фронтсенче нимĕçсен 116 танкне çĕмĕрсе тăкнă. Сывлăшри çапăçусенче тата зенитнăй артиллери тăшманăн 9 самолетне персе ӳкернĕ.

☆ ☆ ☆

Быдгощ (Бромберг) хулинчен çурçĕртерехре тата çурçĕр-хĕвеланăçнерехре пирĕн çарсем çапăçса малалла куçса пынă. Тăшман, çулйĕрсен паха узелĕ пулса тăракан Хойнице (Конитц) хулине хăйĕн аллинче тытса тăма хăтланса, ку участокра хăйĕн çарĕсен пысăк вăйĕсене пухнă. Малтанах хатĕрлесе хунă позицисемпе усă курса, нимĕçсем хăйсен пехотипе танкĕсене контратакăсене кĕрте-кĕрте яраççĕ. Тăшман контратакисене сире-сире ярса, пирĕн пехотинецсем 5 километр малалла кайнă та Хойнице хулинчен 4 километр кăнтăралла ларакан Лихнау ялне туртса илнĕ. Пирĕн ытти чăçсем, Брас шывĕнчен хĕвелтухăçнерехре наступлени туса пырса, 10 километр малалла кайнă та чылай ял туртса илнĕ. Кунти çапăçусенче тăшманăн, вилнисене кăна шута илсен те, пĕр пин салтакпа офицер ытла пĕтнĕ. Нимĕçсен 19 танкĕпе хăй тĕллĕн çӳрекен туппине пĕтерсе тăкнă.

* * *

Белоруссири 1-мĕш фронт çарĕсем хытă çапăçнă хыççăн Шнайдемюль хулине—Померанин хĕвелтухăç пайĕнчи нимĕç оборонин хăватлă тĕреклетнĕ пунктне—туртса илнĕ. Тыткăна лекнисем çапла каласа кăтартаççĕ: нимĕçсен командованийĕ хăйĕн хупăрласа илнĕ гарнизонне Шнайдемюль хулине кирек мĕнле пулсан та алăрач яма хушман. Салтаксене çапла каланă: хупăрласа илнĕ гарнизона пулăшма нимĕçсен танковăй чăçĕсемпе пехота чăçĕсем пыраççĕ, тенĕ. Юлашки кунсенче гитлеровецсем хăйсене аякран пырса пулăшасса шанма пăрахнă та кĕрсе ӳкнĕ «хуранран» хăйсен вăйĕпех çăлăнса тухма хăтланнă. Пирĕн пур-пĕрех вилмелле тесе, вĕсем контратакăсем тунă. Гитлеровецсене пысăк çухатусем кӳнĕ, вĕсен кашни хутĕнчех каялла чакмалла пулнă. Тăшмана халран кăларнă хыççăн паян пирĕн çарсем хулана штурмлама пуçланă та пĕтĕмпех туртса илнĕ. Шнайдемюль вăл чугун çулсен паха узелĕ пулса тăрать. Шнайдемюль витĕр çак чугун çулсем тухса каяççĕ: Данциг—Берлин тата Торунь—Быдгощ—Штаргорд.

* * *

Украинăри 1-мĕш фронт çарĕсем ăнăçлăн наступлени туса пынă. Хирĕç тăракан тăшмана çĕмĕрсе пырса, унăн тĕреклетнĕ пункчĕсене хупăрласа илсе тата аркатса, пирĕн çарсем малалла куçса пынă. Пĕр соединени Одер шывĕн хĕвеланăç хĕрри тăрăх наступлени туса пыракан чăçĕсем Нейштедтель хулине штурмласа туртса илнĕ. Çавăн пекех тата Нейзальц хулипе Фрейштадт хулине туртса илнĕ. Нейзальц хули—чугун çулсемпе шоссе çулĕсен узелĕ тата тăшман оборонин вăйлă тĕреклетнĕ пункчĕ пулса тăрать. Вăл Грюнберг хулинчен 20 километрта кăна ларать. Пирĕн ытти чăçсем хула урамĕсенче икĕ кун хушши хытă çапăçнă хыççăн промышленноçлă паха хулана—Шпроттау хулине тăшман çарĕсенчен тасатнă. Çапăçу хирĕнче нимĕçсен хĕçпăшал тата çар япалисем нумай тăрса юлнă. Лигниц хулинчен кăнтăртарахра наступлени туса пыракан фронт çарĕсем нимĕçсем хытă хирĕç тăнине çĕмĕрсе тăкнă та 20 километр малалла кайнă. Совет танкисчĕсемпе пехотинецсем, çав тери хăвăрт пырса çапса, нимĕçсен гарнизонĕсене аркатса тăкнă та Яуер хулипе Штригау хулине туртса илнĕ. Çавăн пекех тата Бреслау хулинчен 75 километр хĕвеланăçнерехре ларакан Гольдберг хулине туртса илнĕ. Кун касăччĕнхи çапăçусенче нимĕçсенне 32 танк, 48 бронетранспортер тата 150 тупă пĕтерсе тăкнă. Тăшманăн, вилнисене кăна шута илсен те, 4.000 салтакпа офицера яхăн пĕтнĕ.

Украинăри 1-мĕш фронтри рядовойсем, сержантсем тата офицерсем хăйсен чăçĕсен çапăçури ялавĕсене паттăрла паха ĕçсемпе мухтава кăлараççĕ. Гварди капитанĕ Прилипко командир пулса ертсе пыракан рота пĕр хаяр çапăçура гитлеровецсене пĕр батальона çити пĕтерсе тăкнă. Губарев капитан ертсе пыракан подразделени хăйĕнчен нумай йышлăрах тăшман вăйĕсемпе çапăçма тытăннă та 300 нимĕçе çити пĕтерсе тăкнă, 90 гитлеровеца тыткăна илнĕ. Войко лейтенант ертсе пыракан взвод нимĕçсен икĕ ротине çĕмĕрсе тăкнă, вара нимĕçсем тарма тытăннă. Взвод боецĕсем тăшманăн 40 салтакне вĕлернĕ, 20 гитлеровеца тыткăна илнĕ. Орловцев сержант командир пулса ертсе пыракан тупă расчечĕ нимĕçсен пĕр танкне, пĕр çăмăл автомашинине персе çĕмĕрнĕ тата тăшман салтакĕсен пĕр ушкăнне пĕтерсе тăкнă. Снайпер кĕçĕн сержант Кузьмин пĕр нимĕç ялĕнчи урама кунĕпех персе тăнă, 20 гитлеровеца вĕлернĕ. Михед рядовоя нимĕçсен офицерĕпе икĕ салтакĕ тапăннă. Михед çĕçĕ туртса кăларнă та нимĕçсене виççĕшне те чиксе вĕлернĕ.

ПОЛЬША ХАЛĂХ СОВЕЧĔН ПРЕЗИДЕНЧĔ Б. БЕРУТ ГОСПОДИН ТАТА ПОЛЬША РЕСПУБЛИКИН ВĂХĂТЛĂХ ПРАВИТЕЛЬСТВИН ПРЕМЬЕР-МИНИСТРĔПЕ ЮТ ÇĔРШЫВ ĔÇĔСЕН МИНИСТРĔ Э. ОСУБКА-МОРАВСКИЙ ГОСПОДИН МУСКАВА КИЛНИ

Февралĕн 14-мĕшĕнче Мускава Польша Халăх Совечĕн Президенчĕ Б. Берут господин тата Польша республикин Вăхăтлăх правительствин Премьер-Министрĕпе Ют çĕршыв Ĕçĕсен Министрĕ Э. Осубка-Моравский господин килнĕ.

Аэродромра Б. Берутпа Э. Осубка-Моравский господинсене çаксем хирĕç тухса кĕтсе илнĕ: СССР Ют çĕршыв Ĕçĕсен Халăх Комиссарĕн Заместителĕ А. Я. Вышинский, СССР Наркоминделĕн 4-мĕш Европа Отделĕн Заведующийĕ В. А. Зорин, СССР Наркоминделĕн Протокол Отделĕн Заведующийĕн Заместителĕ Г. И. Фомин, Оборона Халăх Комиссариачĕн Тулашри çыхăну Отделĕн Начальникĕ М. П. Кутузов генерал-майор, çавăн пекех тата Польшăн СССР-ти Посолĕ С. Модзелевский господин тата вăл ертсе пыракан Польша Посольствин дипломатиллĕ составĕ.

Б. Берут тата Э. Осубка-Моравский господинсемпе пĕрле Мускава Польшăри Совет Посолĕ В. З. Лебедев килнĕ.

Союзлă государствăсем хăйсен тыткăна лекнĕ çыннисемпе гражданла çыннисем пирки тунă Килĕшӳ

Крымри конференцире Британи, Америка тата Совет делегацийĕсем Великобританин, Совет Союзĕн тата Америкăри Пĕрлешӳллĕ Штатсен тыткăна лекнĕ тата гражданла çыннисене, союзниксен Германи çĕрĕ çине кĕрсе пыракан хĕçпăшаллă вăйĕсем ирĕке кăларнăскерсене, хӳтĕлес, тăрантарас тата тивĕçлĕ çĕршывсене ăсатас пирки татăклă килĕшӳ тăвасси çинчен калаçнă. Февралĕн 11-мĕшĕнче СССР-па Великобритани тата СССР-па Америкăри Пĕрлешӳллĕ Штатсем тунă Килĕшӳсен текстчĕсем пĕр пекех. Совет Союзĕпе Великобритани тунă Килĕшӳ çине В. М. Молотов тата Иден господин алă пуснă. Совет Союзĕпе Америкăри Пĕрлешӳллĕ Штатсем тунă Килĕшӳ çине Грызлов генерал-лейтенант тата Дин генерал алă пуснă.

Çав Килĕшӳсем тăрăх союзниксен гражданĕсене тăван çĕршыва ăсатма транспорт уйăрса париччен кашни союзник ытти союзниксен гражданĕсене апат-çимĕç, тумтир, медицина пулăшăвĕ парса тăмалла тата ытти енчен те пулăшса тăмалла. Британипе Америкăн хĕçпăшаллă вăйĕсем ирĕке кăларнă совет гражданĕсене вĕсем Европа континентĕнче е Пĕрлешӳллĕ Королевствăра хăйсене киле ярассине кĕтсе пурăннă чухне тăрантарса пăхса усрас ĕçре совет офицерĕсем Британипе Америка влаçĕсене пулăшса тăмалла. Британи çыннисене тата Америка гражданĕсене пăхса усранă çĕрте Совет правительстви Британипе Америка офицерĕсем пулăшса тăмалла.

Тыткăна лекнĕ çар çыннисене тата уйрăм гражданисене хăвăртрах килĕсене тавăрас тĕллевпе виçĕ правительство пĕрне пĕри пур майсемпе те пулăшса тăма пулаççĕ.

ВКП(б) тата ВЛКСМ уставĕсене пичетлесе кăларнă

Çак кунсенче ВКП(б) уставĕ 5000-лĕ тиражпа чăвашла пичетленсе тухрĕ. Çывăх вăхăтрах ВЛКСМ уставĕ тухмалла, ăна пичетлеме хатĕрлесе çитерни ĕнтĕ.

ВКП(б) Обкомĕпе Чăваш АССР Совнаркомĕнче

Районсем хушшинче 1944 çулта колхозсенчи обществăллă выльăх-чĕрлĕхе ĕрчетессишĕн пынă социализмлă ăмăртăвăн итогĕсем çинчен

ВКП(б) Обкомĕн бюровĕпе Чăваш АССР Совнаркомĕ, районсем хушшинче 1944 çулта колхозсенчи обществăллă выльăх-чĕрлĕхе ĕрчетессишĕн пынă социализмлă ăмăртăвăн итогĕсене пăхса тухса, çапла йышăннă:

1944 çулта колхозсенчи обществăллă выльăх-чĕрлĕхе ĕрчетессишĕн пынă социализмлă ăмăртура Сĕнтĕрвăрри районĕ малта тухнă тесе палăртас. Чăваш АССР Совнаркомĕпе ВКП(б) Обкомĕн куçса çӳрекен Хĕрлĕ Ялавне Сĕнтĕрвăрри районне парас.

Уйрăмăнах палăрнă зоотехниксене, ветврачсене тата выльăх-чĕрлĕх ĕрчетес тĕлĕшпе ĕçлекен ытти специалистсене премилеме Сĕнтĕрвăрри райисполкомне 10.000 тенкĕ укçа памалла тăвас.

1944 çулта выльăх-чĕрлĕх ĕрчетес енĕпе Çĕрпӳ, Октябрьски, Куславкка тата Чурачăк районĕсем аван ĕçленине палăртас.

АМЕРИКĂРИ ПĔРЛЕШӲЛЛĔ ШТАТСЕН ГОСУДАРСТВО СЕКРЕТАРĔ ЭДВАРД Р. СТЕТТИНИУС ГОСПОДИН МУСКАВРА ПУЛНИ ÇИНЧЕН

Февралĕн 13-мĕшĕнче СССР Совнаркомĕн Председателĕн Заместителĕ тата Ют çĕршыв Ĕçĕсен Халăх Комиссарĕ В. М. Молотов тата США-н Государство Секретарĕ Эдвард Р. Стеттиниус господин Пысăк Театрта «Лебединое озеро» балет курнă.

Тĕп ложăра çавăн пекех США-н СССР-ти посолĕ В. А. Гарриман господин, Государство Департаменчĕн Европа Отделĕн Директорĕ Ф. Маттьюс господин, США Çар Миссийĕн Пуçлăхĕ Д. Дин генерал-майор, Е. В. Хилл генерал, С. Н. Робертс генерал, С. Сполдинг генерал, С. И. Олсен адмирал, Государство Департаменчĕн Политикăллă уйрăм ĕçсен канцелярийĕн Директорĕн заместителĕ А. Хисс господин, СССР Ют çĕршыв Ĕçĕсен Халăх Комиссарĕн Заместителĕсем А. Я. Вышинский, В. Г. Деканозов, М. М. Литвинов, Совет Союзĕн США-ри Посолĕ А. А. Громыко, Ф. Ф. Кузнецов генерал-полковник, Мускав Совечĕн Председателĕ Г. М. Попов, Ют çĕршыв Ĕçĕсен Халăх Комиссариачĕн США Отделĕн Заведующийĕ С. К. Царапкин тата ыттисем те пулнă.

Театрта çавăн пекех союзлă государствăсен посольствисемпе миссийĕсен пуçлăхĕсемпе ответлă сотрудникĕсем, СССР Наркоминделĕн ответлă сотрудникĕсем, Совет пичечĕпе ют çĕршывсен пичечĕн представителĕсем пулнă. Ложăна Америкăн тата Совет Союзĕн ялавĕсемпе илемлетнĕ. Спектакль пуçланас умĕн Америкăпа Совет Союзĕн гимнĕсене каланă. Театрта пулнисем, нумайччен алă çупса, Эдвард Р. Стеттиниус господинпа В. М. Молотова хĕрӳллĕн саламланă.

СССР ЮТ ÇĔРШЫВ ĔÇĔСЕН ХАЛĂХ КОМИССАРĔН ЗАМЕСТИТЕЛĔ А. Я. ВЫШИНСКИЙ ПАТĔНЧЕ АМЕРИКĂРИ ПĔРЛЕШӲЛЛĔ ШТАТСЕН ГОСУДАРСТВО СЕКРЕТАРĔ ЭДВАРД Р. СТЕТТИНИУС ГОСПОДИН ЯЧĔПЕ ИРХИ АПАТЛАНУ ПУЛСА ИРТНĔ

Февралĕн 13-мĕшĕнче Ют çĕршыв Ĕçĕсен Халăх Комиссарĕн Заместителĕ А. Я. Вышинский Америкăри Пĕрлешӳллĕ Штатсен халĕ Мускавра пурăнакан Государство Секретарĕ Эдвард Р. Стеттиниус господин ячĕпе ирхи апатлану тунă.

Апатланура çаксем пулнă: Эд. Стеттиниус господин, США-н СССР-ти Посолĕ В. А. Гарриман господин, Государство Департаменчĕн Европа Отделĕн Директорĕ Ф. Маттьюс господин, США Çар Миссийĕн Пуçлăхĕ Д. Дин генерал-майор, Е. В. Хилл генерал, С. Н. Робертс генерал, С. Сполдинг генерал, С. И. Олсен адмирал, Государство Департаменчĕн Политикăллă уйрăм ĕçсен канцелярийĕн Директорĕн заместителĕ А. Хисс господин, Стеттиниус господинпа пĕрле килнĕ Т. Л. Тайсон, В. Фут господинсем тата США посольствин сотрудникĕсем. Совет Союзĕ енчен çаксем пулнă: А. И. Микоян, В. Г. Деканозов, М. М. Литвинов, А. А. Громыко, Ф. И. Голиков генерал-полковник, Ф. Ф. Кузнецов генерал-полковник, Л. М. Галлер адмирал, Г. М. Попов, А. Д. Крутиков, В. А. Сергеев, Н. Г. Пальгунов тата СССР Наркоминделĕпе Наркомвнешторгĕн ответлă сотрудникĕсем пулнă.

АМЕРИКĂРИ ПĔРЛЕШӲЛЛĔ ШТАТСЕН ГОСУДАРСТВО СЕКРЕТАРĔ ЭДВАРД СТЕТТИНИУС ГОСПОДИН МУСКАВРАН ТУХСА КАЙНИ

Февралĕн 14-мĕшĕнче Америкăри Пĕрлешӳллĕ Штатсен Государство Секретарĕ Эдвард Р. Стеттиниус господин Мускавран тухса кайнă.

Центральнăй аэродромра Стеттиниус господина çаксем ăсатса янă: СССР Ют çĕршыв Ĕçĕсен Халăх Комиссарĕ В. М. Молотов, СССР Ют çĕршыв Ĕçĕсен Халăх Комиссарĕн Заместителĕ А. Я. Вышинский, Совет Союзĕн США-ри Посолĕ А. А. Громыко, Тулашри суту-илӳ Халăх Комиссарĕн Заместителĕ В. А. Сергеев, Мускав Совечĕн Председателĕ Г. М. Попов, СССР Наркоминделĕн Протокол Отделĕн Заведующийĕн Заместителĕ Г. И. Фомин, Мускав хулин коменданчĕ К. Р. Синилов генерал-лейтенант, çавăн пекех тата США-н СССР-ти Посолĕ Гарриман господин, США посольствин дипломатиллĕ составĕ тата США Çар Миссийĕн членĕсем.

Ăсатнă вăхăтра хисеплĕ хурал тăратнă тата США-па СССР-ăн государство гимнĕсене каланă. Аэродрома Пĕрлешӳллĕ Штатсемпе Совет Союзĕн ялавĕсемпе илемлетнĕ.

ЭДВАРД Р. СТЕТТИНИУС ГОСПОДИН КАЛАНИ

Мускавран тухса каяс умĕн США-н Государство Секретарĕ Эдвард Р. Стеттиниус господин аэродромра микрофон умĕнче çапла каланă:

«Лэди тата джентльменсем! Мускавран Пĕрлешӳллĕ Штатсене тухса каяс умĕн эпĕ Молотов господина хама кунта çав тери ăшшăн кĕтсе илнĕшĕн чĕререн тав тăватăп. Эпĕ çĕнĕ тус тупрăм, вăл туспа нумай вăхăт хушши тата творчествăллă çыхăнса тăрассине эпĕ питĕ шанатăп. Çавăн пекех эпĕ Гарриман Посола, паллă американеца, тав тăвас тетĕп. Эпир пурте ăна çирĕппĕн шанса тăратпăр тата хисеплетпĕр. Ăшă кăмăлпа йышăннăшăн тав тăватăп.

Сывă пулăр».

Крымри конференцин решенийӗсене ырлаççӗ

ВАРНАР. (Телефонпа). Союзлӑ виçӗ держава руководителӗсен Крымра пулса иртнӗ конференцийӗн решенийӗсене радиопа пӗлтернине вӑрманпромхоз коллективӗ тулли кӑмӑлпа кӗтсе илчӗ. Радиопа итленӗ хыççӑн, парторг Шегуров юлташ рабочисемпе служащисене конференцин пӗлтерӗшӗпе унӑн решенийӗсем çинчен ӑнлантарса пачӗ. Рабочисемпе служащисем конференци материалӗсене питех те интересленсе итлерӗç, чылай ыйтусем парса ыйтса пӗлчӗç. Конференци пирки хӑйсен шухӑш-кӑмӑлӗсене пӗлтерчӗç. Стахановка Издуганова юлташ çапла каларӗ: «Çак вӑрçӑра эпир çӗнтересси пире пурне те паллӑ. Конференци решенийӗсем çавна татах та çирӗплетсе параççӗ. Татӑклӑ çӗнтерӳ кунӗ çывӑх ӗнтӗ. Çак шанчӑк пирӗн ӗçлес кӑмӑла татах та çӗклет».

Вӑрманпромхоз коллективӗ хальхи вахӑтра хавхаланса ӗçлет, чугун çул валли вутӑ хатӗрлемелли плана Хӗрлӗ Çар кунӗ тӗлне тултарассишӗн кӗрешет. Февралӗн 14-мӗшӗ тӗлне 55.710 кубометр вутӑ хатӗрленӗ, 46.180 кубометр турттарса тухнӑ. Плана тултарма татах та 6 пин кубометр вутӑ хатӗрлемелле. Пирӗн коллектив çав вутта февралӗн 23-мӗшӗччен хатӗрлет.

Л. ПРАСЕЕВ,
Вӑрманпромхоз директорӗн заместителӗ.

Февраль уйӑхӗнчи программӑна срокчен тултарма пулаççӗ

Февралӗн 14-мӗшӗнче Якунин юлташ главнӑй инженер пулса ӗçлекен завод коллективӗн митингӗ пулса иртрӗ. Союзлӑ виçӗ держава руководителӗсен Крымри конференцийӗн решенийӗсем çинчен митингра ВКП(б) Шупашкар хула комитет секретарӗн промышленность енӗпе ӗçлекен заместителӗ Мойсик юлташ каласа пачӗ. Митингра пулнисем конференци решенийӗсене тимлӗн итлерӗç, чылай çынсем тухса каларӗç.

— Хӗрлӗ Çар вӑйлӑн хӗснипе тӑшман вилӗм шӑтӑкӗ патне пырса тӑчӗ,—терӗ митингра стахановка Нина Кац.—Нимӗçсен фашистла çарӗ пуçӗпех арканса каяс вӑхӑт инçе мар. Крымри конференцин решенийӗсем гитлерла Германие аркатса тӑкмалли вӑхӑта татах та çывхартаççӗ.

Конференци решенийӗсемпе хавхаланса, стахановка Нина Кац ӗç хӑвӑртлӑхӗпе пахалӑхне татах та ытларах ӳстерме пулать.

Çавӑн пек обязательствӑсене цех коллективӗсем те илчӗç. Буйволов юлташ начальник пулса ӗçлекен Хӗрлӗ ялавлӑ цех февраль уйӑхӗнчи плана Хӗрлӗ Çар кунӗ тӗлне тултарма пулчӗ.

Митинг резолюци йышӑнчӗ. «Крымри конференцин решенийӗсене завод коллективӗ февраль уйӑхӗнче производство программине ирттерсе тултарнипе ответлет», тенӗ резолюцире.

Çӗнтерӳ кунӗ çывхарнӑ чух килте ларма тӳсӗм çук

СЕНТЕР, февралӗн 15-мӗшӗ. (Телефонпа). Ильинкӑри «Производственник» артель коллективӗ иртнӗ уйӑхра та плана ытлашшипех тултарчӗ. Халӗ, Союзлӑ виçӗ державӑн руководителӗсен Крымри Конференцийӗ Германи милитаризмӗпе нацизмне пӗтерсе тӑкасси çинчен йышӑннине илтсен, рабочисен ӗçри хастарлӑхӗ татах та ӳсрӗ. Вӗсем виçӗ державӑн руководителӗсем йышӑннӑ решенисене чӗререн ырлаççӗ, мухтавлӑ Хӗрлӗ Çара пур майсемпе те пулӑшса тӑма пулаççӗ.

Мастера Корпусов юлташа, чирлӗ пирки, отпуска кайма ирӗк панӑ пулнӑ. Анчах вӑл отпуск илмерӗ.

— Çӗнтерӳ кунӗ çывхарнӑ чух килте ларма тӳсӗм çук,—терӗ Корпусов юлташ.

Артель коллективӗ февральти плана Хӗрлӗ Çар кунӗ тӗлне тултарса çитерме сӑмах пачӗ.

А. СОЛОВЬЕВ.

РЕСПУБЛИКАРИ КОЛХОЗСЕНЧЕ 1945 ÇУЛХИ ФЕВРАЛЕН 10-МЕШЕ ТЕЛНЕ ÇУРАКИНЕ ХАТЕРЛЕНЕС ЕÇ МЕНЛЕ ПЫНИНЕ КАТАРТАКАН

СВОДКА
(процентпа)

Районсем	Пӗрчӗллӗ тыра вӑрлӑхӗсене сортланӑ	Хӗлле тислӗк кӑлармалли плана тултарнӑ
Вӑрнар	100,0	78,8
Комсомольски	100,0	26,2
Хӗрлӗ Чутай	100,0	58,4
Сӗнтӗрвӑрри	100,0	58,0
Октябрьски	100,0	93,8
Шупашкар	100,0	47,2
Чурачӑк	100,0	82,5
Етӗрне	100,0	67,6
Кувакино	100,0	36,2
Шӑхасан	99,9	69,5
Елчӗк	99,8	68,8
Вӑрмар	97,8	75,5
Ишлей	97,7	76,2
Элӗк	95,5	53,9
Сӗнтӗр	94,8	65,7
Куславкка	94,7	52,0
Красноармейски	94,4	69,1
Чкаловски	93,8	78,0
Канаш	92,1	78,3
Пӗпреç	91,5	[illegible]
Улатӑр	91,1	39,0
Муркаш	90,4	77,4
Çӗрпӳ	87,6	[illegible]
Тӑвай	[illegible]	62,6
Калинино	85,7	[illegible]
Сӗмӗрле	[illegible]	44,6
Пӑрачкав	80,2	88,7
Советски	76,7	58,7
Первомайски	74,6	66,6
Шӑмӑршӑ	63,1	28,2
Пӗтӗмпе	93,3	62,3

Нихӑçанхинчен те вӑйлӑ штурм

Будапешт хулине çавӑрса илнӗ хыççӑн Хӗрлӗ Çар тӑшманӑн пысӑк группировкине хупӑрласа илес ӗçе çав тери чаплӑ вӗçлене пӗтӗм тӗнче курчӗ. Хӗрлӗ Çарӑн çак вӑрçӑра пирвайхи хут Будапешт пек кучухнехи пысӑк хулана, индустриллӗ пысӑк центра штурмласа тытса илмелле пулчӗ. Нимӗç командованийӗ çапла калатчӗ: Будапешта эпир нихӑçан та памастпӑр. Будапешт патӗнче Совет Союзӗ Сталинградпа Ленинград патӗнче Германи тӳснӗ пекех пысӑк поражени тӳсӗ, тетчӗ. (Сталинградпа Ленинград патӗнче поражени тӳсни çинчен Германи халӗ калама пултарать ӗнтӗ).

Будапештра юлнӑ гитлеровецсем пӗтӗм вӑйпа хирӗç тӑрса çапӑçнӑ. Совет ультиматумне сирсе янӑ хыççӑн тата совет парламентерӗсене тискеррӗн вӗлернӗ хыççӑн вӗсем хӑйсен икӗ май анчах юлнине—штурма сирсе пӑрахасси е пӗтесси анчах юлнине лайӑх пӗлсе тӑнӑ.

Хӗрлӗ Çарӑн героизмӗпе ӑсталӑхӗ çав икӗ майран пӗрне кӑна, нимӗçсен çав тери тискер преступленийӗсемшӗн вӗсене тавӑрмаллине кӑна хӑварнӑ. Будапешт хулине пӗр уйӑх çурӑ хушши хупӑрласа тӑнӑ хыççӑн тытса илнӗ. Çакӑ вӑл йӗри-таврипех пыракан наступлени, нихӑçан курман вӑйлӑ çапӑçу пулнӑ.

Будапештра темиçе пин квартал, темиçе пин çурт. Чӳречесене кирпӗчпе хупласа, персе тӑмалли шӑтӑксем çеç хӑварнипе, подвалсенче танксене перекен йывӑр тупӑсем, çурт çиййӗсемпе чердаксем çине — зенитнӑй тупӑсем, чӳречесенчи шӑтӑксене —автоматсемпе пулеметсем лартса тухнипе кашни çурт питӗ пысӑк дот пулса тӑнӑ. Хулана икӗ пая уйӑракан нумай утравлӑ Дунай шывӗ те, Хӗрлӗ Çар чаçӗсем хула варрине татса кӗрес пулсан, тӗреклетнӗ вырӑн шутӗнче пулнӑ. Дунай урлӑ хывнӑ кӗперсем нумайӗшӗ штурм пуçланас умӗн тӗрӗс-тӗкӗлех пулнӑ, вӗсем тӑшмана хӑйӗн Дунай шывӗн тӗрлӗ енчи çарӗсене кирлӗ çӗре куçарма май панӑ. Хула варринчи, Дунай шывӗ айӗнчи туннель те çак ӗçе пулӑшса тӑнӑ.

Хупӑрласа илнӗ тӑшман группировкин çар техники нумай пулнӑ, нимӗç командованийӗн заказне пурнӑçлакан заводсем пулнӑ. Чепель утравӗн çурçӗр пайӗнче тата хулари икӗ ипподромра аэродромсем пулнӑ, боеприпассем сахал мар пулнӑ. Çавӑн пекех тата апат-çимӗç те сахал пулман, перекетлесе валеçсе тӑрас пулсан вӑл чылай вӑхӑта çитме пултарнӑ.

Совет Союз Маршалӗн Малиновскин соединенийӗсем штурмлама хулан хӗвелтухӑç хӗрринчи тулашри оборона тӑрӑхӗнчен пуçланӑ. Пур йышши хӗçпӑшалсемпе те усӑ курса штурмланӑ. Çӗнӗ çул кунӗ, çав тулашри тӗреклетнӗ тӑрӑха шӑтарса кӗрсе, пирӗн чаçсем хулара 200 квартал йышӑннӑ. Хӗвеллӗ çутӑ кун пирӗн штурмлакан авиаци ӗçӗсене пулӑшса тӑнӑ. Вӑл авиаци наступлени туса пыракан совет подразделенийӗсем умӗнче тӑшманӑн оборона узелӗсене арката-арката пынӑ. Тӑшманӑн тулашӗнчи тӗреклетнӗ вырӑнӗсене татса кӗрес ӗçре пысӑк усӑ панӑ танковӑй чаçсем урам хушшисенче çапӑçнӑ çӗрте, унта кашни машинӑн баррикадӑсем туса хунӑ хӗсӗк хушӑксенче пӗчченшерӗн çапӑçмалла пулнӑ пирки, пысӑк усӑ пама пултарайман.

Наступлени туса пыракан чаçсем пӗкӗ пек фронтпа хула кварталӗсене кӗрсе кайсан, артиллерипе инженерла-саперла çарсен пысӑк тата хисеплӗ ӗç тумалла пулнӑ. Вӗсем пехотӑна малалла куçма майсем туса парса тӑнӑ. Хирӗç тӑрса çапӑçмалли узелсем туса хунӑ чул çуртсем çине хупӑ позицисенчен тата инçерен пени усӑ пама пултарайман. Подвалсене кӗрсе ларнӑ гитлеровецсем инçерен пыракан снарядсенчен пытанма пултарнӑ, вӑл снарядсем е урамсенче, е çуртсен çӳлти хутлӑхӗсенче çурӑла-çурӑла кайнӑ. Тӑшмана куçпа пӑхсах курӑннӑ çӗрте пырса çапмалла пулнӑ. Персе тӑмалли вырӑнсене çав тери хӑвӑрт улӑштарма тивнӗ, мӗншӗн тесен пирӗн штурмлакан пехота хулӑм стенасене снарядсемпе персе шӑтарнӑ шӑтӑксем витӗр çиййӗнчех кӗре-кӗре кайнӑ. Кунсӑр пуçне, пӗр çӗртен тепӗр çӗре куçакан гитлеровецсем хӑвӑрт улшӑнакан тӗллев пулса тӑнӑ. Çавӑн пирки те хула гарнизоне штурмланӑ артиллерие тӳрремӗнех персе тӑма пехотӑпа пӗрле янӑ.

Çывӑхри çуртсенчен (вӗсене пытанса ларакан тӑшмантан пӗтӗмӗшпех тасатса çитереймен пирки) кӗтмен çӗртенех автоматсемпе пенӗ, урамалла гранатӑсем вӑркӑнтарнӑ. Артиллери расчечӗсен боецӗсемпе офицерӗсен пӗр пайӗ вара çавӑнтах стрелоксем-пехотинецсем пулса, çуртсен çӳлти хучӗсене хӑпара-хӑпара кайнӑ, тӑшманпа штык вӗççӗн çапӑçнӑ. Урамсен кӗтессисене хӑвӑрт илсе тухнӑ çӑмӑл тупӑсем хӑйсене контратакӑлакан «тигрсемпе» «фердинандсене» хирӗç çапӑçнӑ. Пирвайхи хут тӗл пенипех вӗсене тивертсе сиенленӗ. Персе çӗмӗрнӗ танксене, хӑй тӗллӗн куçакан тупӑсене тата бронетранспортерсене саперсемпе пехотинецсем çунтара-çунтара янӑ.

Хулашӑн пынӑ çак вӑйлӑ çапӑçусенче вӑрçӑ историйӗнче ку таранччен пулман примерсем те пулкаланӑ.

Будапешта штурмланӑ çӗрте инженерла-саперла чаçсем уйрӑмӑнах паллӑ вырӑн йышӑнса тӑнӑ. Гитлеровецсем кашни хваттертех, кил хушшинчи кашни стена хыçӗнчех тата ниепле тупӑ илсе кӗртме май çук хушӑксенче хирӗç тӑрса çапӑçнӑ.

Çакӑн пек условисенче пӗр задача час-часах нумай пӗчӗкрех задачӑсем çине пайланнӑ. Вӑл задачӑсене саперсем пулӑшнипе çеç пурнӑçа кӗртме май пулнӑ. Гитлеровецсем пытаннӑ пӗр-пӗр подвала сирпӗнтерсе ярасси, гитлеровецсем кӗрсе ларнӑ пӗр-пӗр чул çурта хупӑрласа илесси, пӗр-пӗр стена витӗр пехотӑпа артиллери валли çул хывасси, пырса тӗкӗнсенех сирпӗнсе кайма пултаракан минӑсене катертесси, — çаксем ӗнтӗ пурте пехотӑпа артиллери çумӗнче наступлени туса пыракан саперсен ӗçӗ пулнӑ.

Пехотинецсем, артиллеристсем, саперсем тата çӗр çинчи ытти чаçсем тӑшмантан çурт хыççӑн çурт, квартал хыççӑн квартал тытса илсе, Дунай патнелле çывхарса пынӑ вӑхӑтра вӗсене штурмлакан авиаци летчикӗсем çав тери пысӑк пулӑшу панӑ. Тӗллемесӗр бомбӑсем пӑрахнипе хула халӑхне сиен кӑтартас мар тесе, пирӗн йывӑр бомбардировщиксем Будапешт çинче вӗçмен. Хулана штурмлас ӗçе «Ильюшинсем» хутшӑннӑ. Зениткӑсенчен вӑйлӑн перетӗнине пӑхмасӑрах, вӗсем хушнӑ çӗре тӗлех бомбӑсем пӑрахнӑ, кӑтартнӑ çӗре тупӑсемпе, пулеметсемпе пенӗ. Ку ӗçре ӗнтӗ питех те тӗл пемелле пулнӑ. Хӑшпӗр чухне çапла та пулнӑ: нимӗçсем тӗреклетнӗ пункт туса хунӑ пӗр-пӗр çурт çине бомбӑсем пӑрахмалла, анчах та юнашар çурт çине пӑрахма юрамасть, мӗншӗн тесен вӑл çурта пирӗн боецсем йышӑнса илнӗ. Ракетӑсем ярса, хӗрлӗ ялавсем лартса, сигналсем памалли системӑпа усӑ курса тата сӑнаса тӑракан постсем тӗплӗн кӑтартса-кӑтарта панине пула, пирӗн çӗр çинчи чаçсем летчиксене кашни вӑхӑтра тӑшманпа пирӗн хушӑри чикӗ ӑçта пынине асӑрхаттарса тӑнӑ.

Хӑшпӗр чухне летчиксене пит йывӑр условисенче çапӑçма тивнӗ. Пирӗн çӗр çинчи çарсем хула хӗррине пырса çеç кӗнӗ вӑхӑтра гвардеецсен пӗр авиачаçӗ хула тулашӗнчи пӗр аэродрома йышӑнса илнӗ. Хӑпаракан е анса ларакан совет самолечӗсене хулари тӑшман ахаль куçпах курма пултарнӑ, вӑл аэродром çине тупӑсемпе тата миномётсемпе персе тӑнӑ. Самолетсем çывӑхӗнче снарядсемпе минӑсем çурӑла-çурӑла кайнӑ. Аэродромри летчиксем пулеметсемпе пӑшалсем пенин сассине илтнӗ. Анчах вӗсен хӑйсен ӗçне тумаллах пулнӑ.

Пирӗн чаçсем, хула центрне тухса, унӑн ӗçлӗ кварталӗсем патне çывхарсан, унта çурма ункӑ пек курӑнакан кӗтеслӗ урамсенче юлашки кунсенче туса хунӑ çӗнӗ чӑрмавсене тӗл пулнӑ. Çавӑн пек чӑрмавсем оборонӑн икӗ линийӗ пулнӑ. Вӗсенчен пӗри центра пӗкӗ пек ӑвса илнӗ, унӑн вӗçӗсем хулари икӗ кӗпер патне—Маргарита кӗперӗнчен пуçласа Хорти кӗперӗ патне çитиччен пынӑ. Оборонӑн çав рубежӗ 2—3 метр хулӑмӗш, 1—2 метр çӳллӗш чул баррикадӑсенчен тӑнӑ. Вӗсем патӗнче минӑсем лартса тухнӑ. Кашни кӗтесрех тата урӑх баррикадӑсем, дотсемпе дзотсем пулнӑ. Çакӑн йышши иккӗмӗш рубеж шалти пӗчӗкрех ункӑпа—сӑнчӑрлӑ кӗпертен пуçласа Франц Иосиф кӗперӗ патне çити пынӑ. Çак икӗ рубежа та пралуксемпе карса тухнӑ. Кашни çуртранах хӗреслӗ персе тӑнӑ. Кунсӑр пуçне, Дунай урлӑ хывнӑ кӗперсем патӗнче танксене чарма канавсем чавса тухнӑ, рельсӑсемпе бетонран юпасем туса лартнӑ, пралуксем карса тухнӑ тата минӑсем лартса тухнӑ.

Икӗ кун хушшинче пирӗн чаçсем пӗррелӗш рубежа пӗтӗм таткӑшӗпех татнӑ та хула варрине кӗрсе кайнӑ. Гитлерла командовани хупӑрласа илнӗ группировкӑн тӗп вӑйӗсене Дунай шывӗн хӗвеланӑç енне куçарма хушнӑ. Дунай шывӗн хӗвелтухӑç енче венгерсен чаçӗсене хӑварнӑ тата вӗсене каялла чакма чармашкӑн нимӗçсен эсэсовецсен хӑшпӗр чаçӗсене хӑварнӑ. Çав пӗр 20 пин çынна çитекен чаçсем хӑйсен аллинче юлнӑ хула пайне çав тери нумай минӑсем лартса тухнӑ, çуртсене сирпӗнтере-сирпӗнтере янӑ. Ку тӗлӗшпе вӗсем çав çуртсем истори е архитектура енчен паха пулнине пӑхса тӑман. Хулари халӑха вӗлерсе пынӑ.

Январӗн 18-мӗшӗнче совет чаçӗсем хулан хӗвелтухӑç пайне (Пешта) тӑшмантан тасатса пӗтернӗ те Дунай шывӗ хӗррине тухнӑ. Хулан хӗвеланӑç пайӗнче (Будӑра) хаяр çапӑçусем пуçланса кайнӑ. Вилме хӑварнӑ хӑйӗн салтакӗсене Гитлер Будӑна пур майсемпе те хӳтӗлеме хушнӑ, часах пулӑшу пама пулнӑ. Анчах вӑл сӑмахсем, яланхи пекех, суя сӑмахсем кӑна пулнӑ.

Нимӗç чаçӗсем çурçӗртен, каярахпа кӑнтӑртан, пехотӑпа танксен пысӑк вӑйӗсемпе Буда патне тухма хӑтланнӑ. Анчах та пирӗн çарсем вӑйлӑн пыра-пыра çапнине пула, вӑл ӗçсем путланса ларнӑ. Çурçӗр енчен наступлени туса пыракан тӑшман группировкине пысӑк сиен кӳрсе каялла хӑваласа янӑ. Кӑнтӑрти группировкӑна та çавӑн пекех арката тӑкнӑ.

Хупӑрласа илнӗ тӑшман гарнизонӗ çав тери вӑйлӑн çапӑçнӑ. Чул çуртсенчен гитлеровецсем нумай вӑхӑт хушши пур енчен те хӳтӗленмелли вырӑнсем туса хунӑ. Пирӗн штурмлакан группӑсем, артиллери пулӑшса тӑнипе, тӑшманӑн тӗреклетнӗ пункчӗсене çӗмӗрӗ-çӗмӗрӗ, çаплах малалла куçса пынӑ. Квартал хыççӑн квартал совет воинӗсен аллине кӗрсе пынӑ. Тӑшман группировкине хупӑрласа илнӗ ункӑ хӗсеннӗçемӗн хӗсӗнсе пынӑ.

Февралӗн 13-мӗшӗнче Украинӑри 2-мӗш фронт çарӗсем, Украинӑри 3-мӗш фронт çарӗсем пулӑшса пынипе, пӗр уйӑх çурӑ хушши хупӑрласа тӑнӑ хыççӑн тата пысӑк хулари йывӑр условисенче хаяррӑн çапӑçса пырса, Будапештра хупӑрласа илнӗ тӑшман группировкине пӗтӗмӗшпех аркатса тӑкнӑ. Венгри столицине—нимӗçсен Вена хули патнелле каякан çул çинчи оборонин стратегиллӗ паха узелне—пӗтӗмӗшпех тытса илнӗ. Будапешт хулишӗн пынӑ çапӑçусенче Украинӑри 2-мӗш фронт çарӗсем тӑшманӑн 110.000 салтакӗпе офицерне тыткӑна илнӗ. вӑл шутра—Будапешт хулинчи группировкӑн командующийӗ пулнӑ Пфефер Вильденбрух генерал-полковника унӑн штабӗпе пӗрле тыткӑна илнӗ тата хӗçпӑшалпа тӗрлӗ çар хатӗрӗсем нумай тытса илнӗ.

Павел **ЛУКНИЦКИЙ.**
БУДАПЕШТ, февралӗн 13-мӗшӗ.
(ТАСС спецкорӗ).

Союзлӑ виçӗ держава руководителӗсен Крымри конференцийӗн решенийӗсем çинчен ют çӗршывсенче мӗн çыраççӗ

США

ВАШИНГТОН, февралӗн 12-мӗшӗ. (ТАСС). Шурӑ Çурт Крымра пулса иртнӗ конференци çинчен Сталин, Рузвельт тата Черчилль пӗрле тунӑ заявление пичетлесе кӑларнӑ.

Демократсен тата республиканецсен партийӗсен Конгресри членӗсем Крымри историллӗ конференцийӗн решенийӗсене хӗрӳллӗн саламлаççӗ.

НЬЮ-ЙОРК, февралӗн 12-мӗшӗ. (ТАСС). Февралӗн 12-мӗшӗнче кӑнтӑрлахи хаçатсем тухман, мӗншӗн тесен вӑл США президенчӗ Линкольн çуралнӑ кун пулать. Анчах та паллӑ радиостанцисем Крымра пулса иртнӗ виçӗ держава руководителӗсен конференцийӗ çинчен калакан пӗлтерӗве хӑйсен передачисене чарсах панӑ. Кӑнтӑрлахи тата каçхи бюллетеньсенче тата передачӑсен программисенче чи малти вырӑнта Крымри историллӗ конференцин решенийӗсем пулнӑ.

ЮГОСЛАВИ

БЕЛГРАД, февралӗн 13-мӗшӗ. (ТАСС). «Борьба» хаçат малтанхи страницӑра виçӗ держава руководителӗсен Крымри конференцийӗ çинчен калакан пӗлтерӗве пысӑк заголовокпа пичетлет. Унта çапла каланӑ: конференцире «пирӗн çарсем тата пирӗн авиаци Германие хӗвелтухӑçӗнчен, хӗвеланӑçӗнчен, çурçӗртен тата кӑнтӑртан тата вӑйлӑрах пыра-пыра çапасси пирки пӗтӗмпех каласса татӑлнӑ. вӑл плансене тӗплӗн туса хунӑ», тенӗ. Хаçатра И. В. Сталинӑн Ф. Рузвельтӑн тата У. Черчиллӗн пысӑк портречӗсене пичетлесе кӑларнӑ.

АНГЛИ

ЛОНДОН, февралӗн 13-мӗшӗ. (ТАСС). Лондонри радио пӗлтернӗ тӑрӑх, союзлӑ виçӗ держава руководителӗсен Крымри конференцийӗн решенийӗсене Лондонра, Вашингтонра тата Мускавра питӗ савӑнса йышӑннӑ. Лондонри хаçатсем Крымри конференцин результачӗсем çинчен пичетлесе кӑларнӑ пӗлтерӗве тӗнчене çӗнӗрен туса хумалли харти вырӑнне хурса хаклаççӗ.

Англири хаçатсем Крымри конференци пирки калакан пӗлтерӳсем çинчен умстатьясем пичетлесе кӑларнӑ.

ФРАНЦИ

ЛОНДОН, февралӗн 13-мӗшӗ. (ТАСС). Рейтер агентстви Парижран пӗлтернӗ тӑрӑх, «Орор» хаçат çапла çырать: Крымри конференцин результачӗсем пирки, вал конференцие Франци хутшӑнман пулсан та, Франци савӑнма кӑна пултарать. «Конференци йышӑннӑ решенисене,—çырать хаçать,—пӗтӗмӗшпе илсен, ырламасӑр тӑма çук, мӗншӗн тесен вӑл решенисем Германи халӑхне мар, Германи милитаризмне пӗтермелле».

Хӗвеланӑç Европӑри вӑрçӑ ӗçӗсем

ЛОНДОН, февралӗн 13-мӗшӗ. (ТАСС). Союзниксен экспедицилле вӑйӗсен верховнӑй командованийӗн штабӗ пичетлесе кӑларнӑ пӗлтерӳре çапла каланӑ: союзниксен çарӗсем Германире Клеве хуличчен Рейн патнелле каякан чугун çул çине тухнӑ. Клеве хулине тӑшмантан тасатнӑ. Клеве хулинчен кӑнтӑртарахра союзниксен çарӗсем Гау патне çитнӗ.

Бельгипе Германи чиккинчен хӗвелтухӑçнерехре Германири Прюм хулине пӗтӗмӗшпе тенӗ пекех тӑшмантан тасатнӑ. Тӑшман вӑл хула çине миномётсемпе, тупӑсемпе тата пӑшалсемпе персе тӑрать. Прюм хулинчен виçӗ миля кӑнтӑр-хӗвеланӑçнерехре ларакан Батберат хулине тытса илнӗ. Вейсвампахран 4 миля хӗвелтухӑçнерехре ларакан Севенна хулинче çапӑçусем пыраççӗ.

Унтан кӑнтӑртарахра союзниксен чаçӗсем Вианден хулине кӗрсе кайнӑ, вӑл хулара çапӑçусем пыраççӗ. Боллендорфа тӑшмантан тасатнӑ.

Çурçӗр Эльзасра тӑшман Рейн çывӑхӗнчи Обергофен хулин заводсем ларакан районне кӗрсе кайнӑ. Тӑшманӑн хулан ытти пайӗсене кӗрсе кайнӑ пысӑк мар отрячӗсене сапаласа янӑ. Обергофен хулинче 10 кун ӗнтӗ хаяр çапӑçусем пыраççӗ.

Февралӗн 9-мӗшӗнче союзниксен чаçӗсем хӗвеланӑç фронтӗнче 2.536 çынна тыткӑна илнӗ.

Февралӗн 13-мӗшӗ ыран тенӗ чух çӗрле çӑмӑл бомбардировщиксен соединенийӗ Штуттгарт хулине тата Хӗвеланӑç Германири вӑрçӑ объекчӗсене тапаннӑ.

ЛОНДОН, февралӗн 13-мӗшӗ. (ТАСС) Союзниксен Вӑтаçӗр тинӗс таврашӗнчи хӗçпӑшаллӑ вӑйӗсен штабӗ пичетлесе кӑларнӑ пӗлтерӳре çапла каланӑ: Италире çанталӑк япӑх пулнипе фронтӑн пур участокӗсенче те питӗ сахал çапӑçнӑ.

ЛОНДОН, февралӗн 14-мӗшӗ. (ТАСС). Союзниксен экспедицилле вӑйӗсен верховнӑй командованийӗн штабӗ пичетлесе кӑларнӑ пӗлтерӳре çапла каланӑ: Голландири Неймегенран хӗвелтухӑçнерехре союзниксен çарӗсем Германире Гритхаузен хулине тытса илнӗ. Клеве хулинчен хӗвелтухӑçнерехре Рейхсвальд вӑрманӗн пысӑк пайне тӑшмантан тасатнӑ. Геннепран хӗвелтухӑçнерехре (Германире) союзниксем хӑйсен Мирс шывӗ çинчи плацдармне аслӑлатнӑ.

Прюм хулине тӑшмантан тасатнӑ. Унтан кӑнтӑртарахра союзниксем Ур шывӗ çинчи Вианден хулине йышӑннӑ, Ур шывӗнчен хӗвелтухӑçнерехре Аммельдинген хулине йышӑнса илнӗ.

Эхтернахран çурçӗртерехре (Германире) союзниксем Эшвейлер хулине йышӑннӑ. Эхтернахербрюк хули. Сюр шывӗн хӗвелтухӑç сыранӗнче ларакан Эккер, тата тӑшманӑн çав хула çывӑхӗнчи тӗреклетнӗ чылай пункчӗсем халӗ союзниксен аллинче.

Гардт тӑвӗсем çинче тата Çурçӗр Эльзас тӳремӗнче тӑшман çарӗсен активлӑхӗ ӳснӗ.

Лотарингире, Хагенауран кӑнтӑр-хӗвелтухӑçнерехре, Обергофенри заводсен районне тӑшмантан тасатнӑ. Союзниксен авиацийӗ кунӗпех тӑшманӑн чугун çулӗсемпе ытти çулӗсене пыра-пыра çапнӑ.

Февралӗн 14-мӗшӗ ыран тенӗ чух çӗрле йывӑр бомбардировщиксен пысӑк соединенийӗсем Дрезден, Магдебург хулисене тата Лейпцигран кӑнтӑртарахри Болен синтетически горючи заводне тапаннӑ.

ЛОНДОН, февралӗн 14-мӗшӗ. (ТАСС). Союзниксен Вӑтаçӗр тинӗс таврашӗнчи хӗçпӑшаллӑ вӑйӗсен штабӗ пичетлесе кӑларнӑ пӗлтерӳре каланӑ тӑрӑх, Италире, 5-мӗшпе 8-мӗш армисен участокӗсенче, патрульсем çапӑçнӑ.

Йывӑр бомбардировщиксен пысӑк соединенийӗсем ӗнер тӑшманӑн Австрири, Югославири çулӗсем çине тата Çурçӗр Италири портсене тапаннӑ.

Профсоюзсен пӗтӗм тӗнчери конференцийӗнче

ЛОНДОН, февралӗн 13-мӗшӗ. (ТАСС). Ӗнер пӗтӗм тӗнчери профсоюзсен конференцийӗнче вӑрçӑ хыçӗнхи йӗркесем çине профсоюзсем мӗнле пӑхмалли çинчен сӳтсе явнӑ.

Пулас мирлӗ килӗшӳ пирки профсоюзсен мӗнле позици йышӑнмалли çинчен сӗнӳсем хатӗрлеме конференци комисси уйӑрса хунӑ. Комисси 14 çынтан тӑрать. Совет делегацийӗнчен вӑл комиссие Кузнецов юлташ кӗрет.

Лару вӗçӗнче конференци профсоюзсен пӗтӗм тӗнчери федерацийӗн никӗсӗ çинчен Сидней Хиллмэн докладне итленӗ.

ЛОНДОН, февралӗн 14-мӗшӗ. (ТАСС). Пӗтӗм тӗнчери профсоюзсен конференцийӗн февралӗн 12-мӗшӗнчи каçхи ларӑвӗнче Америкӑри производстваллӑ профсоюзсен конгресӗн представителӗ Сидней Хиллмэн сӑмах тухса каланӑ. Вӑл çапла каланӑ:

«Эпир кунта хамӑр тӗллевсене палӑртса хутӑмӑр, çав тӗллевсене эпир, рабочисем, ирӗклӗхе юратакан мӗнпур çӗршывсемпе пӗрле ырлатпӑр».

«Эпӗ пӗлетӗп,—тенӗ малалла Хиллмэн,—кунта ларакансенчен пӗри те эпир халь йышӑнакан программа хӑй тӗллӗнех пурнӑçа кӗрӗ тесе шухӑшламасть. Ӑна татӑклӑн тата вӑйлӑн кӗрешсе çеç пурнӑçа кӗртме пулать. Реакцин хӑватлӑ та лайӑх организациленӗ вӑйӗсем çав халӑх программине хирӗç кӗрешеççӗ. Реакцин çав вӑйӗсем пирӗн тӑшмансен çӗршывӗсенче кӑна мар, вӗсем пирӗн çӗршывсенче те пур. Çав вӑйсем, эпир вӑрçӑра çӗнтернӗ хыççӑн пирӗн программӑна пӑчлантарса лартас тесе, пачах та кӗрешеççӗ, малашне тата хаяртарах та уççӑнрах кӗрешӗç».

«Эпӗ çапла шутлатӑп: ирӗклӗхе юратакан нацисен пӗтӗм тӗнчери организацине тума Думбартон-Оксра панӑ сӗнӳсене эпир халех йышӑнма чӗнӗпӗр. Эпир çак тӗллеве чӑнах пурнӑçа кӗртме шанатпӑр пулсан, пирӗн çакӑнтан нумай сӑмахлатарах ыйтӑва татса памалла—профсоюзсен пӗтӗм тӗнчери организацине халех туса хума пултарнине кӑтартса памалла».

Хиллмэн производстваллӑ профсоюзсен конгресӗ ячӗпе çакӑн пек сӗннӗ: «Профсоюзсен пӗтӗм тӗнчери çӗнӗ организацине тумалла, ӑна кашни нации çаканта делегатсем янӑ профсоюзӗсен организацийӗсем çывӑх вӑхӑтрах çирӗплетмелле» тата «çак конференцие делегатсем янӑ организацисен ячӗпе каласма пултаракан комитет тумалла, çав комитет, хӑйне çителӗклӗ чухлӗ организацисем çирӗплетессине кӗтсе, хатӗрлӳ комитечӗ вырӑнӗнче ӗçлемелле, çав организацисем çирӗплетнӗ хыççӑн вӑл вара пӗтӗм тӗнчери профсоюзсен çӗнӗ организацийӗн вӑхӑтлӑх исполнительнӑй комитечӗ пулса тӑрӗ».

Çавӑн пек тума сӗнсен, Хиллмэн юлашкинчен çапла каланӑ: «Çӗнтерес ӗçре çав тери пысӑк вырӑн йышӑнса тӑнӑ рабочисем тӗнчене йӗркелес ӗçе пӗтӗмпех ыттисене шанма пултараймаççӗ. Тӗнчене рабочисен анлӑ массисен интересӗсемпе, ӗмӗчӗсемпе тата нушисемпе килӗштерсе тусассӑн çеç вӑл тӗрӗслӗхлӗ те çирӗп пулма пултарать. Эпир, профсоюзсен юхӑмӗн руководителӗсем, халӑх ирӗкне палӑртмалли хӑватлӑ оруди туса хума пултаратпӑр».

Хиллмэн хӑйӗн сӑмахне каласа пӗтерсен, делегатсем пурте ура çине тӑнӑ та ӑна вӑрахӑн тӑвӑллӑн алӑ çупса саламланӑ.

Куçса çӳрекен Хӗрлӗ Ялава илнӗ колхозра

Комсомольски районри «Трактор» колхоз, вӑрçӑ вӑхӑтӗнчи йывӑрлӑхсене çӗнтерсе пырса, 1944-мӗш ялхуçалӑх çулне унччченхинчен нумай лайӑхрах ирттерчӗ. Вӑл çуракине вӑхӑтра, агротехникӑллӑ мероприятисене лайӑх пурнӑçа кӗртсе ирттерчӗ, 218 гектар çинчи тырпула пӗр тӑкаксӑр пухса кӗртрӗ, авӑн çапассине сентябрӗн 15-мӗшӗ тӗлне вӗçлерӗ. Кӗрхи тырӑсене вӑхӑтра акса хӑварчӗ, ку енӗпе плана 101 процент пурнӑçларӗ.

Колхоз выльӑх-чӗрлӗх ӗрчетес тӗлӗшпе те малта пырать. Государство планне пур выльӑхсем енӗпе те тултарнӑ. Мӑйракаллӑ шултӑра выльӑхсем енӗпе 104 процент, сыснасем енӗпе 103 процент, сурӑхсем енӗпе 100,9 процент тултарнӑ. 1944 çулта кашни 100 сурӑхран 128 путек илсе пӑхса çитӗнтернӗ. Çамрӑк выльӑхсем пӗре те вилмен. Выльӑхсене лайӑх пӑхни, вӑхӑтра апатлантарни, лайӑх çуртйӗрсенче усрани выльӑх-чӗрлӗх продуктивноçне чылай ӳстерме май панӑ. Çак колхозра кашни сӑвакан ӗнерен çулталӑкра 1856 литр сӗт сунӑ, кашни сурӑхран 2 килограмм вырӑнне 2,8 килограмм çӑм илнӗ.

Колхоз государство умӗнчи обязательствӗсене пурне те срокчен тултарнӑ тата 1945 çулшӑн аванс шучӗпе 367 центнер тырӑ парса хунӑ.

Сталин юлташӑн Октябрьти Социализмлӑ Аслӑ Революци 27 çул тултарни çинчен тунӑ доклачӗпе хавхаланса, çӗнтерӳ туса пыракан Хӗрлӗ Çара татах та ытларах пулӑшас тесе, колхозниксемпе колхозницӑсем Хӗрлӗ Çар фондне планран ирттерсе 2202 пӑт тӗштырӑ панӑ. Унсӑр пуçне государствӑна, 1945 çулхи обязательство тӑрӑх, аванс шучӗпе, 25 центнер аш-какай, 2736 литр сӗт, 970 çӑмарта, 62 килограмм çӑм, 2,8 центнер кантӑр вӑрлӑхӗ, 1,1 центнер сӳс парса хунӑ. Колхозниксене кашни ӗçкунӗ çине 2,8-шер килограмм тӗштырӑ валеççе панӑ. Кирлӗ фондсене пӗтӗмпех çителӗклӗ таран уйӑрнӑ.

Кӑçалхи çураки валли колхоз çителӗклӗ таран вӑрлӑх хатӗрленӗ, ӑна сортланӑ тата шӑтас пахалӑхне тӗрӗсленӗ. Çуракинче кирлӗ пулакан машинӑсемпе плугсене, инвентарьсене тата ут таврашӗсене юсаса хатӗрленӗ.

1944 çулта вӑйлӑ тырпул туса илес тӗлӗшпе пынӑ социализмлӑ ӑмӑртура мала тухнӑшӑн «Трактор» колхоза Чӑваш АССР Совнаркомӗн куçса çӳрекен Хӗрлӗ Ялавне панӑ. «Трактор» колхозӑн мухтава тивӗçлӗ колхозникӗсемпе колхозницисем çак Хӗрлӗ Ялава февралӗн 12-мӗшӗнче хӑйсен аллине илнӗ.

«Трактор» колхоз председателӗ Т. Иванова юлташ, çав ялава хӑй аллине илсе, çапла каланӑ:

— Иртнӗ çул пирӗн колхозниксемпе колхозницӑсем, ывӑнма пӗлмесӗр ӗçлесе, çак хисеплӗ наградӑна илме тивӗç пулчӗç. Кӑçал эпир иртнӗ çулхинчен те вӑйлӑрах ӗçлӗпӗр, Хӗрлӗ Çарпа Тӑван çӗршыв тата хамӑр валли те çителӗклӗ ялхуçалӑх продукчӗсем туса илме тӑрӑшӑпӑр.

Пухури колхозниксемпе колхозницӑсем, кӑçал та иртнӗ çулхи пек, кӑнтӑрла та, çӗрле те ывӑнма пӗлмесӗр ӗçлесе, пысӑк тухӑçлӑ тырпул туса илме сӑмах панӑ.

П. КОЗЛОВ.

Уйӑхлӑха хутшӑнман колхозсем те пур

ИШЛЕЙ. (Телефонпа). Вӑрман хатӗрлес тӗлӗшпе фронтри пек ӗçлемелли уйӑхлӑха районри чылай колхозсем хутшӑнчӗç. Уйӑхлӑхра тӑрӑшса ӗçлесе, «МОПР», Молотов ячӗпе тӑракан колхозсем чугун çул валли вутӑ хатӗрлемелли плана тултарчӗç. Халӗ вӗсем планран ирттерсе вутӑ хатӗрлеççӗ.

Тӑрӑн ял Советӗнчи Калинин ячӗпе тӑракан колхоз 300 кубометр вырӑнне 353 кубометр вутӑ касна. Каснӑ вутта турттарма колхоз татах 4 лав ячӗ.

«Красный пахарь» колхоз вӑрман ӗçӗнче юлса пынӑ. Уйӑхлӑха хутшӑнса, колхоз вӑрман касма 12 çын янӑ. Вӗсем колхозӑн вутӑ хатӗрлемелли планне Хӗрлӗ Çар кунӗ тӗлне тултарма обязательство илнӗ.

«1-ое Мая» колхозран мобилизациленӗ çынсем Атӑл леш енчи вӑрманпромхозра вутӑ хатӗрлеççӗ. В. Директорова юлташ ертсе пыракан бригада хӑйӗн куллешхи нормине 120 процент, Е. Волкова юлташӑн бригади 280 процент тултарать. Çак бригадӑсем тухӑçлӑ ӗçленине пула, колхоз планран ирттерсе 125 кубометр вутӑ хатӗрленӗ.

Анчах та вутӑ хатӗрлес ӗçре чылай колхозсем лайӑх ӗçлени хӑшпӗр колхозсем юлса пынине витме пултараймасть. «III Интернационал» колхоз вутӑ хатӗрлес ӗçе тытӑнманпа пӗрех. «Социализм» колхоз 600 кубометр вырӑнне 98 кубометр çеç хатӗрленӗ. Асӑннӑ колхозсен председателӗсем Кутузовӑпа Мыскаринов юлташсем çак кирлӗ ӗçе хакламасӑр, вӑрманта ӗçлеме çынсем çителӗклӗ ямаççӗ.

В. ГУСЬКОВ.

ШВЕЙЦАРИЕ АНГЛИПЕ АМЕРИКАН ЭКОНОМИКА МИССИЙӖ ПЫРСА ÇИТНӖ

ЛОНДОН, февралӗн 12-мӗшӗ. (ТАСС) Рейтер агентстви Берн хулинчен пӗлтернӗ тӑрӑх, ӗнер Швейцарие Англипе Америкӑн экономика миссийӗ пырса çитнӗ. Франци делегацийӗ каласусене февралӗн 13-мӗшӗнче хутшӑнать пуль, теççӗ. Рейтер агентствин корреспонденчӗ çапла çырать:

«Нимӗçсен çар преступникӗсене, вӑл шутра Гитлера, Геббельса, Гиммлера тата Геринга, хура ӗçсем туса тупнӑ хӑйсен пурлӑхне Швейцарие ӑсатнӑскерсене, часах вирлӗн пырса çапӗç. Çакна тума Англин, Францин тата Америкӑн Берн хулине пырса çитнӗ экономика миссийӗ Швейцари правительствипе каласса татӑлни кирлӗ. Экономики миссийӗн задачисенчен пӗри—нимӗçсен пӗр-пӗр политикӑллӑ пысӑк деятельне е промышленникне вӑл Европӑра оккупациленӗ çӗршывсенче çаратнӑ пурлӑхо упраса хӑварма памалла марри пулать. Германи руководителӗсем тӗрлӗ меслетсемпе пысӑк пурлӑхсем Швейцарире пытарнӑ пулӗ теççӗ».

БЕРЛИНРИ ЛАРУ-ТАРУ

ЛОНДОН, февралӗн 14-мӗшӗ. (ТАСС). «Афтонбладет» ятлӑ Швеци хаçачӗ пӗлтернӗ тӑрӑх, Берлинра выçӑ антӑраççӗ тата çав тери хӑраса ӳкнӗ. Февралӗн 11-мӗшӗнче гитлеровецсен апат-çимӗç магазинӗсем умне хӗçпӑшаллӑ хурал тӑратмалла пулнӑ.

ВЕНГРИН ВАХАТЛАХ ПРАВИТЕЛЬСТВИН ЕÇÇЕМ

ДЕБРЕЦЕН, февралӗн 11-мӗшӗ. (ТАСС). Будапештран тухса тарнӑ чухне гитлеровецсем апат-çимӗç запасӗсене пӗтӗмпех турттарса кайнӑ е пӗтерсе тӑкнӑ. Çавна пула вара столицӑри халӑх апат-çимӗçсӗр тӑрса юлнӑ. Венгрин Вӑхӑтлӑх правительстви халӗ Будапештӑн выçӑ ларакан халӑхне пулӑшас тесе тӗрлӗ ӗçсем тӑвать. Столицӑпа 100 вагон ытла апат-çимӗç янӑ та ӗнтӗ.

Çакӑн çинчен пӗлтерсе, Венгри пичечӗ нимӗçсем тата вӗсен Салаши «правительстви» тунӑ сиене пӗтерес тӗлӗшпе совет командованийӗ питӗ пысӑк ӗçсем тунине кӑтартса парать.

Ответлӑ редактор **В. Я. ЯКОВЛЕВ.**

РЕДАКЦИ АДРЕСӖ: г. Чебоксары, ул. Володарского, 5. Дом печати. ТЕЛЕФОНСЕМ: редактор — 0—67, заместитель секретарӗн — 4—26, парти пурнӑç пайӗн 3—97, промышленность пайӗн — 3—99, ялхуçалӑх пайӗн — 5—31, издательство конторин — 0—22.

НТ 00028 Типографи № 1, Управления полиграфпромышленности при СНК ЧАССР. Заказ № 2. Тираж 16.000